25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
14
ВЫРСАРНИКУН
36(6273) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ХАСТАРЛĂ ĔÇРЕ ФРОНТ ГЕРОЙĔСЕНЧЕН ЮЛАР МАР

ХĔРАРĂМ-ТРАКТОРИСТКĂСЕМ! ПĔТĔМ СОЮЗРИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВА ТУХĂР!

Хĕрарăмсен Дарья Гармаш ертсе пыракан трактор бригади Совет Союзĕнчи мĕнпур трактористкăсем патне янă çыру

Хаклă тусăмăрсем!

Çак савăнăçлă кунсенче эпир, совет хĕрĕсемпе хĕрарăмĕсем, пурте Хĕрлĕ Çарăн геройла воинĕсемпе пĕтĕм чун-чĕререн мухтанатпăр. Анлă фронтра пирĕн воинсем тăшмана хирĕç аркатмаллах наступлени туса пыраççĕ. Тавăру сехечĕ çапрĕ! Сĕмсĕр гитлеровецсем телейлĕ совет халăхне чуралантарма шухăш тытнă. Хăйсен ухмахла планĕсемшĕн фашистсем халĕ хăйсен виллисен куписемпе, çапса аркатнă вуншар дивизийĕсемпе тӳлеççĕ.

Нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатассишĕн тата вĕсене хамăрăн тăван çĕршывăн талккишĕнчен хăваласа кăларассишĕн — малалла! Сталин юлташăн çак лозунгне тытса пырса çапăçаççĕ пирĕн воинсем тăшмана хирĕç. Вуншар пин хуласемпе ялсене гитлерла тискер-кайăксенчен ирĕке кăларнă ĕнтĕ. Тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапнă. Анчах тăшман вăйлă-ха. Тăшман аманнă, анчах ăна вĕлерсех çитереймен-ха. Хăй пурпĕрех пĕтессине туйса, фашистсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Пирĕн паттăр воинсем умĕнче йывăр çапăçусем тăраççĕ. Анчах эпир гитлерла захватчиксен çурăм шăммине çапса хуçатпăр, хамăр халăхăн чыслăхĕпе ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăваратпăр. Эпир — уйхирсенче ĕçлекен хĕрарăмсемпе хĕрсем хамăрăн мĕнпур вăйсене, мĕнпур пĕлӳлĕхе, хамăр чĕресен мĕнпур хĕрӳлĕхне тăван Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре парăпăр.

Хаклă тусăмăрсем!

Эпир, Рязань облаçĕнчи **Рыбновски** МТС-ри трактористкăсем, иртнĕ çулхи çуркунне хĕрарăмсен трактор бригадисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, машина мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илес тесе тăрăшса ĕçлерĕмĕр.

Иртнĕ çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче эпир хĕрарăмсен трактор бригадисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче малти вырăна тухрăмăр. ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илсе, эпир татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшрăмăр.

Çулталăк вĕçленнĕ тĕле пирĕн бригадăри кашни ХТЗ трактор, пĕтĕм ĕçе çемçе ака çине куçарса шутласан, 1.077 гектар сухаланă. Пирĕн бригада 6.082 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çакă вăл трактористкăсем фронтовиксене панă парне пулчĕ. Маруся Кострикина, нумаях пулмасть комсомола илнĕскер, 545 гектар сухаласа 1.450 килограмм горючи перекетленĕ. Вăл 757 ĕçкунĕ туса, çав ĕçкунĕсем çине 2.272 килограмм тĕштырă илнĕ.

Эпир çĕре вăхăтра тата юратса çемçетсе пытăмăр. Колхозсен вăйлă тухăçлă тырпулĕнче пирĕн тӳпе те пурринне туйса тăма хаваслă та савăнăçлă. «Красный пахарь» артельри колхозниксем пирĕн трактористкăсем сухаланă участоксенче кашни гектартан 17-шер центнер тĕштырă пухса илнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулталăка эпир çапла вĕçлерĕмĕр. Анчах пирĕн, совет хĕрарăмĕсен, çитĕнӳсемпе лăпланса ларма юрать-и вара! Паллах, çук! Пирĕн тӳрĕ тивĕçлĕх — фронтовиксен наступленине ĕçри наступленипе пулăшасси пулса тăрать. Кăçалхи çураки пирĕнтен татах та пысăкрах ăнăçусем тума ыйтать. Эпир вара Совет Союзĕнчи мĕнпур трактористкăсене боевой ĕçе тухмашкăн чĕнсе калама шут тытрăмăр.

Ĕçри хаклă тусăмăрсем! Хĕрарăмсен трактор бригадисен 1943 çулхи вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăртăвне хутшăнăр! Машинăсемпе туллин усă курар, кашни тракторăн ĕç тухăçлăхне ӳстерер, уйхире лайăхрах сухаласа çемçетер, горючин кашни тумламне перекетлер.

Пирĕн бригада çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитрĕ. Мĕнпур тракторсемпе вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене эпир юсаса çитернĕ. Эпир хамăр ĕçлемелли участоксене пĕлетпĕр. Кăçалхи çул вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕвĕн татах та активлăрах организаторĕсем пулас тесе, эпир халĕ çине тăрсах агротехникăна вĕренетпĕр.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн бригада хăй çине çакăн пек обязательствăсем илет:

— Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа, çемçе суха çине куçарса шутласан, 1.100 гектартан кая мар сухаламалла;

— Çуракине, тырпул пухса кĕртес ĕçе, çĕртме тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене чи кĕске сроксенче тата пахалăхлăн туса ирттермелле;

— Горючипе сĕрмелли материалсене палăртнă нормăран 15 процентран кая мар перекетлесе хăвармалла;

— Простойсем тумалла мар, тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăмалли мĕнпур правилăсене график тăрăх çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла, машинăсене пĕрре те çĕмĕрĕлме памалла мар. Хамăрăн машинăсене, фронтовиксем çапăçури хĕçпăшала пăхса усранă пекех, тимлĕн пăхса усрăпăр.

Хаклă тусăмăрсем! Социализмлă ăмăртăва хутшăнăр, хăвăр çине татăклă обязательствăсем илĕр, вĕсене халех, çуракине хатĕрленнĕ çĕртех, çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырăр.

Колхоз уйхирĕсенчи пирĕн хастар ĕç нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатассине хăвăртлаттăр.

1943 çулта вăйлă тырпул пухса илер! Нимĕç оккупанчĕсене çапса аркатма тата вĕсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларма Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйпа пулăшар!

Рязань облаçĕнчи Рыбновски МТС-ри хĕрарăмсен 10-мĕш номерлĕ трактор бригадин бригадирĕ—**Дарья Гармаш.**

Бригадирăн помощникĕ — **Николай Финогенов**, трактористсем: **Полина Титова, Анна Анисимова, Мария Кострикина, Анна Батурина, Анна Стародымова, Вера Устинова, Мария Матуся**

Партипе Совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ

Ĕнер, февралĕн 13 мĕшĕнче, Шупашкарта партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ уçăлчĕ. Канашлăва тухăçлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановецсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, партипе совет работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем пухăннă.

Канашлăва Мари АССР делегацийĕ килнĕ, ăна Мари АССР Совнарком председателĕн заместителĕ И. А. Ведерников юлташ ертсе пырать.

Канашлăва, кĕске сăмах каласа, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ А. Матвеев юлташ уçрĕ.

Канашлу президиумĕнче—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков, Ахазов, Никитин, Крылов, Бобров, Кузьмин, Андреев, Репкин юлташсем, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. Андреева, Парти контроль Комиссин Уполномоченнăйĕ Серов, Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов, ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ Караушев, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васянин тата ытти юлташсем.

Канашлăван хисеплĕ президиумне, тăвăллăн алă çупса тата «ура» кăшкăрса, ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйлаççĕ.

Кун йĕркинче тăватă ыйту: çуракине хатĕрленесси çинчен, канашлу участокĕсем чĕнсе калнине йышăнасси, Мари республикипе пирĕн республика хушшинчи ăмăрту договорне йышăнасси, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене парасси.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн преньисем пуçланчĕç. Паян канашлу хăйĕн ĕçне малалла туса пырать.

Канашлу халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ патне яма çырнă çырăва пысăк хавхаланупа, тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем НОВОЧЕРКАССК, ЛИХАЯ, ЗВЕРЕВО, НОВОШАХТИНСК, ЗОЛОЧЕВ хулисене йышăнса илнĕ

1. Февралĕн 13-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, татăклă атака тунă хыççăн, НОВОЧЕРКАССК хулине тытса илнĕ. Хулана чи малтан генерал-майор А. И. УТВЕНКО юлташăн та та генерал-майор П. Г. ЧАНЧИБАДЗЕ юлташăн соединенийĕнчи полковник И. Ф. СЕРЕГИН юлташăн чаçĕсем çĕмĕрсе кĕнĕ.

2. Генерал-майор И. Т. ШЛЕМИН юлташăн войскисем, наступление малалла аталантарса пырса, ЛИХАЯ хулипе пысăк чугунçул узелне, ЗВЕРЕВО хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

Пирĕн войскăсем çавăн пекех тата НОВОШАХТИНСК хулине те йышăнса илнĕ.

3. Украинăра пирĕн войскăсем, вăйлăн çапăçнă хыççăн, ЗОЛОЧЕВ хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 12-мĕшĕнче Кубань çинче пирĕн войскăсем татăклăн атакăласа **Краснодар** хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата **Тимашевская** ятлă район центрĕпе чугунçул узелне, **Роговская, Динская, Новотитаровская** ятлă район центрĕсемпе чугунçул станцийĕсене тата **Тохтамукай** ятлă район центрне тытса илнĕ.

Пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса **Шахты** хулине тата **Кривянская** ятлă район центрне тытса илнĕ.

Украинăра пирĕн войскăсем вирлĕн тапăнса пырса **Красноармейское** хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ, çапла вара тăшманăн чи паха чугунçулне татнă.

Украинăра пирĕн войскăсем тата **Ворошиловск** хулине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Февралĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 8 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 250 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 20 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростов районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн вăйлăн хирĕç тăракан чаçĕсемпе çапăçнă. Пĕр участокра пирĕн боецсем нимĕç пехотипе танкĕсен пысăк контратакине сирсе янă. Тепĕр участокра гварди лейтенанчĕ Поршиков ертсе пыракан танк тăшман танкĕсен засади патне пырса тухнă. Пирĕн танкистсем нимĕçсен 14 танкĕпе хăюллăн çапăçма тытăннă, тăшманăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе ĕнер нимĕçсен 31 самолетне пĕтерсе тăкнă. Краснодар районĕнче зенитнăй артиллери нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсен летчикĕсем парашютпа аннă, вĕсене вара тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ нимĕç летчикĕсем каланă тăрăх, вĕсем пикировка тăвакан бомбардировщиксен эскадринче тăнă. Çав эскадрăна çак кунсенче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Тунисран илсе килнĕ.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă, тăшманăн темиçе опорнăй пунктне, çав шутра 2 чугунçул станцине тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕç танкĕсемпе мотопехотин чылай пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене хирĕç контратакăсем тума хăтланнă. Çапăçура нимĕçсен 13 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тăшман чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳснĕ, вара, çапăçу хирĕнче темиçе орудипе вуншар автомашина пăрахса хăварса, каялла чакнă.

* * *

Лозовая районĕнче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем, тăшманăн контратакисене сире-сире ярса, малалла кайнă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Артиллери батарейине, ултă кĕпçеллĕ 2 миномет, 13 пулемет тата 2 радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Белгородран кăнтăралларахра пирĕн чаçсем малалла тапăнса пырса, тăшмана халăх пурăнакан темиçе пысăк пунктран хĕссе кăларнă. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçусенче 4 йывăр орудии, 103 ручной тата станковăй пулемет, 500 винтовка тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре Н-ски часть 4 кун хушши хаяррăн çапăçса нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 50 оруди, 158 пулемет, 50 миномет, 850 винтовка, 150 лаша тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем те пур.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ январь уйăхĕнче тăшманăн 11 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 8 паровоз тата 129 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçса, совет патриочĕсем 6 оруди, 25 пулемет, 18 автомат, 296 винтовка тата 50 пин патрон тытса илнĕ. Нимĕçсенчен вĕсем Германие яма хатĕрлесе хунă 2.436 пуç мăйракаллă выльăх тата 2.000 тоннăна яхăн тырă турттса илнĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем пыра-пыра çаппипе каялла чакнă чухне нимĕçсем халăх пурăнакан пунктсене çунтара-çунтара яраççĕ, мирлĕ пурăнакан халăха тискеррĕн вĕлерсе пĕтереççĕ. Орел облаçĕнчи Александровка ялĕнче гитлеровецсем колхозниксен 27 çуртне çунтарса янă. Вутра колхозниксен мĕнпур пурлăхĕ çунса кайнă. Нимĕçсем çав облаçри Утаковка ялĕнче тискер ĕç тунă. Фашистла ирсĕрсем шкул патне 40 колхознике хăваласа пынă та вĕсене ретĕн тăратса тухнă, унтан пурне те персе вĕлернĕ.

ТАСС опроверженийĕ

Анкарари радио февралĕн 10-мĕшĕнче çакăн пек пĕлтерӳ сарнă: «Паулюс фельдмаршала тата нимĕçсен ытти генералĕсене вĕсем Украинăра тискер ĕçсем тунăшăн ответ тыттараççĕ тата çар судне параççĕ. Советсем шутланă тăрăх, нимĕç генералĕсем Совет территоринче хăйсем тунă ĕçсемшĕн хăйсем ответ тытма тивĕçлĕ», тенĕ вăл пĕлтерӳре.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: Анкарари радио панă çав пĕлтерӳ, — ăна Германи майлă элементсем кăларса янă пулмалла, — малтан пуçласа вĕçне çитиех суя пĕлтерӳ пулса тăрать, вăл чăнлăхпа нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 35-мĕш номĕрте).

117. Анна Петровна **Петровăна** — Канаш районĕнчи «Малалла» колхозри свинаркăна.
118. Василий Петрович **Петрова** — Вăрмар МТС-ĕн старши агрономне.
119. Роман Петрович **Петрова** — Канаш районĕнчи Ямапкасси ялсовет исполкомĕн председательне.
120. Зоя Порфирьевна **Порфирьевăна**—Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозри свинаркăна.
121. Кирилл Васильевич **Романова** Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тарапай ялсовечĕн председательне.
122. Константин Алексеевич **Романова**—Йĕпреç МТС политотделĕн начальникне.
123. Ленилла Леонтьевна **Самаринăна**—Комсомольски МТС-ри хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирне.
124. Григорий Степанович **Саперева**—Куславкка МТС-ĕн трактористне.
125. Гаврил Савельевич **Сафронова**—Çĕмĕрле районĕнчи «Правда» колхозри фермăсен заведующине.
126. Анна Семеновна **Семеновăна** — Шăхасан МТС-ĕн трактористкине.
127. Елизавета Семеновна **Семеновăна**—Красноармейски районри «Правда» колхозăн колхозницине.
128. Михаил Порфирьевич **Семенова**—Ишлей районĕнчи «Парижская Коммуна» колхозăн председательне.
129. Фадей Семенович **Семенова**—Элĕк районĕнчи Ехремкасси ялсовет исполкомĕн председательне.
130. Федора Сергеевна **Сергеевăна**—Çĕрпӳ районĕнчи «Понер» колхозăн телятницине.
131. Наталья Ивановна **Соколовăна**—Куславкка районĕнчи «Первое мая» колхозри свинаркăна.
132. Гурий Григорьевич **Синякова**—Çĕрпӳ районĕнчи «Молодая сила» колхозри фермăсен заведующине.
133. Иван Александрович **Ситова**—Чкаловски МТС-ĕн трактор бригадин бригадирне.
134. Георгий Осипович **Скворцова**—Çĕрпӳ районĕнчи «Чуваш ЦИК» колхозăн председательне.
135. Иван Алексеевич **Скворцова** — ĕççынни депутачĕсен Шăхасан районĕнчи Совечĕн исполком председательне.
136. Михаил Федорович **Скворцова**—Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозăн председательне.
137. Анна Филипповна **Смирновăна**—ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарьне.
138. Феодосия Яковлевна **Смирновăна**—Елчĕк районĕнчи Ново-Байдеряково ялсовечĕн председательне.
139. Николай Дмитревич **Соколова**—Элĕк районĕнчи «Доброволец» колхозри уйхир ĕç бригадин бригадирне.
140. Раиса Васильевна **Сорокинăна**—Вăрмар МТС-ĕн трактористкине.
141. Мария Алексеевна **Соловьевăна** Кувакино МТС-ĕн трактористкине.
142. Зинон Степанович **Степанова**—Калинински районри Пушкин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
143. Агриппина Никифоровна **Терентьевăна**—Йĕпреç МТС-ĕн трактористкине.
144. Василий Тимофеевич **Тимофеева**—Куславкка районĕнчи «Правда» колхозăн председательне.
145. Михаил Тимофеевич **Тимофеева**—Шăхасан МТС-ĕн комбайнерне.
146. Александр Титович **Титова** — Чăваш АССР Наркомземĕн производство управленийĕн начальникне.
147. Никифор Павлович **Тихомирова** — Комсомольски МТС-ĕн комбайнерне.
148. Виктор Иванович **Токсубаева**—Етĕрне МТС-чи трактор бригадин бригадирне.
149. Анна Александровна **Травинăна** — Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
150. Кузьма Яковлевич **Тямина** — Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхозăн председательне.
151. Игнатий Иванович **Ульянова**—Вăрмар МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирне.
152. Акулина Федоровна **Урядниковăна** — Калинински районри «Коминтерн» колхозăн дояркине.
153. Анастасия Фадеевна **Фадеевăна**—Ишлей районĕнчи «Родина» колхозри выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен бригадăн бригадирне.
154. Георгий Федорович **Федорова**—Вăрмар районĕнчи çĕрĕç пайĕн заведующине.
155. Иван Федорович **Федорова** — Вăрнар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
156. Василий Петрович **Фомичева** — Етĕрне районĕнчи Засурскри ут завочĕн бригадирне.
157. Гурий Алексеевич **Херсонова**— — ĕççынни депутачĕсен Ишлей районĕнчи Совечĕн исполком председательне.
158. Александра Петровна **Хомкона** — Ишлей районĕнчи çĕрĕç пайĕн участокри зоотехникне.
159. Наталья Игнатьевна **Хосинăна** Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхозăн йĕтĕн акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевойне.
160. Фадей Степанович **Чаганова** — Советски районри «Радио» колхозăн председательне.
161. Анна Григорьевна **Чеванинăна**—Кувакино районĕнчи «Путь Ильича» колхозри свинаркăна.
162. Степан Арсентьевич **Чекменева**—Çĕмĕрле МТС-ĕн комбайнерне.
163. Вадим Петрович **Чернова** — Чăваш АССР Наркомземĕн политсектор начальникне.
164. Василий Николаевич **Чернова**—Тăвай МТС-ĕн политотдел начальникне.
165. Андрей Яковлевич **Чечнева** — Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхозăн председательне.
166. Таисия Емельяновна **Чурмаковăна** — ВЛКСМ Октябрьски райкомĕн секретарьне.
167. Андрей Максимович **Шиброва** — Куславкка районĕнчи Карачри ветеринари лечебницин заведующине.
168. Иван Никандрович **Широва** — Тăвай МТС-ĕн директорне.
169. Евдокия Николаевна **Шикинăна** — Октябрьски районри «Волга» колхозăн дояркине.
170. Зинаида Ивановна **Шишковăна** — Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозăн дояркине.
171. Иван Александрович **Шорникова** — Чăваш АССР çĕрĕç халăх комиссарĕн заместительне.
172. Павел Владимирович **Щипцова** — Тăвай районĕнчи çĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
173. Иван Викторович **Яхварова** — Элĕк МТС-ĕн директорне.
174. Прокопий Александрович **Яшина** — Елчĕк МТС-ĕн директорне.
175. Василий Яковлевич **Яковлева**—«Чăваш Коммуни» хаçатăн редакторне.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи февралĕн 12-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

П. В. Тощев юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Государствăн Плановăй Комиссийĕн председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен

Петр Васильевич **Тощев** юлташа Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Государствăн Плановăй Комиссийĕн председателĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1943 çулхи февралĕн 12-мĕшĕ.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Фрол Васильевич **Васильев** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă пирки, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Государствăн Плановăй Комисси председателĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

ĂМĂРТУРА МАЛА ТУХНИСЕМПЕ ТАНЛАШАР!

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇРИ ÇĔНĔ ÇИТĔНӲСЕМШĔН

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварассипе тата колхозсенче совхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени выльăхсене ĕрчетессипе боевой программа пулса тăчĕ.

Ишлей районĕнчи колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне темиçе çул хушши пурнăçламасăр тăнăскерсем, 1942 çулта, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, пур йышши выльăхсем енĕпе те государство планне пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. Иртнĕ çул хушшинче майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 145,8 процент, сысна хисепĕ 116,3 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 158,1 процент ӳснĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, район 1942 çулта выльăхсен ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра выльăхсен енĕпе 112,7 процент, сысна енĕпе 112,5 процент, сурăхсен енĕпе 102,7 процент, чăх-чĕп, хур-кăвакал енĕпе 95,3 процент тултарнă.

Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ фронта çĕршыва нумайрах тырă, аш-какай, промышленность валли чĕртавар парассипе вăйăнма чĕнсе каланине пурнăçа кĕртсе пырса, 1942 çулта пысăк çитĕнӳсем турĕç. Районри 110 колхозра государство планне 53 колхоз ирттерсе пурнăçа кĕртрĕç.

«Ырăш пулли» колхоз тур йышши выльăхсене те тата планне пăхнинчен нумайрах ӳстерчĕ. Колхозăн фермисенче халь майракаллă шултăра выльăх 42 пуç вырăнне 52 пуç, сысна 40 пуç вырăнне 67 пуç пур. Фермăсене пурне те комплектласа çитернĕ. Колхоз выльăхсен тухăçлăхне ӳстерес енĕпе паха çитĕнӳсем турĕ. Кашни фуражлă ĕне пуçне фермă сĕт, планра кăтартнă 1000 литр вырăнне, 1.146 литр суса илнĕ, кашни сурăхран çăм 2,3 килограмм вырăнне 2,5 килограмм илнĕ, кашни ама сыснаран 11 çурă вырăнне 12-шер сысна çури илсе ӳстернĕ, 16 пăру вырăнне 23 пăру ӳстернĕ, государство умĕнчи парăмсене пурне те срокчен татнă.

Партипе правительство йышăннă «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăхсен продуктивноçне ӳстересси пысăкăн ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке» колхоз фермисен ĕçне лайăхлатмалли пысăк вăй пулса тăчĕ. Ишлей районĕнчи колхозсем 1942 çулта кашни фуражлă ĕнерен 1941 çулхинчен 191 литр сĕт ытларах суса илсе, сĕт суса илмелли плана 114,5 процент тултарчĕç, кашни сурăхран çăм касса илмелли плана 102,5 процент тултарчĕç. «Родина» колхоз кашни фуражлă ĕнерен 1942 çулта планпа пăхнинчен 173 литр сĕт ытларах суса илнĕ, «Красный флот» колхоз сĕт суса илмелли çулталăкри плана вунă уйăх хушшинче пурнăçланă.

Выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстернĕшĕн тата çамрăк выльăхсене лайăх пăхса сыхласа хăварнăшăн 1942 çулта пурĕ 134 çынна ĕçшĕн хушса тӳленĕ. «Эстафета» колхоз ферминчи доярка Агафия Кушникова юлташ кашни фуражлă ĕнерен планпа пăхнинчен сĕт 165 литр ытла суса илнĕ. Çапла вăл çĕршыва планран ирттерсе пĕр тонна ытла сĕт суса панă. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх Кушникова юлташ 200 литр сĕт илет. «Красная знамя» колхоз ферминчи доярка А. Михайлова юлташ çулталăк хушшинче планпа 1.310 литр сĕт суса илес вырăнне 1.490 литр суса илнĕ. Енесен пăрăвĕсене пурне те лайăх пăхса илнĕ. Михайлова юлташа ĕçшĕн хушса 233 литр сĕт параççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп ферминче ĕçлекен М. Сенцова юлташ çăмарта тăвакан 111 чăхран 10.012 çăмарта пуçтарса илнĕ. Çапла вăл пăхакан чăхсем çулталăк хушшинче 90,2-шер çăмарта тунă.

Выльăхсен хисепне тата тухăçлăхне ӳстерсе пырас ĕçре уйрăмах специалистсем лайăх ĕçлени палăрать. Акрамово ялсоветĕнчи участокра ĕçлекен зоотехник Александра Хомко хăйĕн организациллĕ ĕçне лайăх туса пынине пула колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳ тунă. Çулталăк хушшинче Хомко юлташ 21 колхознике выльăх-чĕрлĕхе зоотехника кăтартнă пек пăхса усрама вĕрентнĕ.

Ишлей районĕ, тĕпрен илсен, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана тултарчĕ. Аш-какай планне 104 процент, сĕт памалли плана 89 процент, çăмарта памалли плана 74,6 процент пурнăçланă.

Колхозсен 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртура Ишлей районĕ мала тухнине палăртрĕç. Ишлей районĕ ăмăртура мала тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ишлей районĕн руководителĕсем, районри колхозниксемпе колхозницăсем ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйсен аллинче çирĕп тытса тăрса, малашнехи пысăк çитĕнӳсемшĕн вăя шеллемесĕр, тата хĕрӳллĕнрех ĕçлĕç. Хĕрлĕ ялав илни çине районри колхозсемпе колхозниксем выльăх-чĕрлĕх хисепне тата тухăçлăхне 1943 çулта тата ытларах ӳстернипе, çакăншăн нумай хут лайăхрах ĕçленипе ответлĕç. Фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай, сĕт-çу нумайрах парса тăрса гитлерла захватчиксен вилĕм кунне хăвăртрах çывхартма Хĕрлĕ Çара пулăшĕç.

А. МИТРОФАНОВА.

Гектартан 120 пăт тырă илессишĕн кĕрешетпĕр

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче партипе правительство ялсовечĕсем умне мирлĕ вăхăтринчен пысăкрах та ответлăрах задачăсем лартрĕ: тăван çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах пахча-çимĕç, тырпул, промышленность валли чĕртавар парса тăмалла; ялти ĕççынни-сене фронта пулăшнă тата государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçланă çĕре мобилизацилемелле.

Пирĕн Шуркасси ялсоветĕнче 5 колхоз. Вĕсем пурте иртнĕ çулхи çуракине ăнăçлăн туса ирттерчĕç, тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕртсе, государство умĕнчи парăмсене срокчен татрĕç. Ямпахри «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз (председателĕ коммунист Александров) 1943 çулшăн аш-какай парса татрĕ. Хĕрлĕ Çар фондне 32 центнер тырă, 2 центнер аш-какай хыврĕ. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар фондне колхозниксем хăйсем 40 центнер тырă пачĕç. Çавăн пекех Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз та государствăна 1943 çулшăн аш-какай памалли обязательствăна 50 процент пурнăçларĕ. Пирĕн ялсовета кĕрекен колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем пĕр январь уйăхĕнче кăна Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 84 тир, 8 мăшăр çăм нускисемпе чăлхасем тата ытти ăшă япаласем пухса пачĕç.

Халь колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсем хатĕр, тата çителĕклĕ. Пурĕ 150 центнер вăрлăх тасатса сортланă. Вăрлăхсем пурте паха кондициллĕ. Колхоз уя планран ирттерсе 545 лав тислĕк кăларнă, 15 гектар çинче юр тытса хăварнă, 11 центнер кĕл, 10 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарьне юсаса хатĕрленĕ. Çакăн пекех ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан, Сталин ячĕпе тăракан, «Борец», «Большевик» колхозсем те Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне çуракине хатĕрленсе çитеççĕ.

Кăçал колхозсем кашни гектартан вăтам шутпа 120 пăт тĕштырă туса илессишĕн ăмăртăва тухрĕç. Иртнĕ çулта та пирĕн ялсоветĕнчи колхозсем районри ытти колхозсенчен пысăкрах тухăçлă тырпул туса илчĕç. «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз кашни гектартан вика 126 пăт, сĕлĕ 100-шер пăт туса илчĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăт тырă илнĕ.

Эпир çак çитĕнӳсене колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне тĕрĕс тата куллен туса пынипе, пĕтĕм ĕçе тĕрĕс организациленипе кăна тума пултартăмăр. Кашни бригадăрах агитаторсем куллен ĕçлесе пычĕç. Вĕсем колхозниксем патĕнче тăтăшах пулаççĕ, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Ильин, «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз председателĕ П. Александров юлташсем хăйсем агитатор пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем правительство постановленийĕсене çийĕнчех ăнлантарса параççĕ, колхозниксене ĕçе мобилизацилеççĕ.

Ялсовечĕн ĕçĕсене кăçал татах та лайăхрах туса пыма, колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре тăтăшах пулăшса пыма тăрăшатăп. Мĕнпур ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтарса пырса, пирĕн колхозсем кăçал ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хатĕрленеççĕ.

М. Александров.
Шăхасан районĕнчи Шуркасси ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Республикăри канашлăва кайма тивĕçлĕ пулнă стахановец-колхозниксем

Ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвне Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенчен 12 çын кайрĕç. Вĕсем пурте ялхуçалăх ĕçĕнче вăя шеллемесĕр, куллен хĕрӳллĕ ĕçлекен стахановец-колхозниксем.

Республикăри канашлура пулма «Колос» колхоз председателĕ Тямин юлташ тивĕçлĕ пулчĕ. Тямин юлташ ертсе пыракан колхоз 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнчи ĕçсене пысăк пахалăхпа вĕçленĕ.

«Çĕнĕ Юнга» колхоз бригадирĕ Виноградова юлташ пултаруллăн ĕçлесе, 1942-мĕш çулта паха çитĕнӳсем тума пултарчĕ. Вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 260 центнер çĕрулми, 16 центнер пăрçа туса илнĕ.

«Свобода» колхозăн ферминче ĕçлекен Антон Семенович Семенов хăй пăхакан 8 ама сыснаран иртнĕ çул 19,1-шер сысна çури илсе ӳстернĕ. «Кама» ятлă ама сысна 21 çурă тунă, вĕсене пурне те пăхса ӳстернĕ.

Республикăри канашлура пирĕн районри чи лайăх ĕçлекен телятница орденоносец Григорьева юлташ пулать. Григорьева юлташ юлашки виçĕ çул хушшинче колхозăн мĕнпур пек пăрăвĕсене пурне те тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе пырать. Виçĕ çул хушшинче колхозра çамрăк пăрусем вилни пачах пулман. 1942 çулта Григорьева юлташ 34 пăру пăхса ӳстерчĕ, пăрусене пăхса ӳстерес ĕçре вăл паха çитĕнӳсем турĕ.

Республикăри канашлăва МТС-ăн паллă комбайнерĕ Питернов юлташ пынă. Питернов юлташ иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче хăйĕн комбайнĕпе 186 гектар тырă вырса пухнă. Çапла вăл плана икĕ хут ытларах пурнăçланă. Канашлăва Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Вязов, «Çĕнĕ Юнга» колхоз членĕ Вазикова тата ытти паллă колхозниксем пынă. Вĕсем пурте колхоз производствинче вăя шеллемесĕр ĕçлекен стахановец-отличниксем. Вĕсен ĕç опытне кашни колхозник, колхозница вĕренмелле, вĕсем пек ĕçлесе, 1943 çулта çĕнĕ çитĕнӳсем тумалла.

Г. Алексеев.

Паян профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать

Паян профсоюзсемпе комсомолăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа туса ирттерекен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать. Вăл Пĕтĕм Союзĕпе туса ирттерекен массăллă ăмăрту пулса тăрать. Вуншар пин комсомолецсем, профсоюз членĕсем, физкультурниксем паян старта тухаççĕ.

Пирĕн çĕршывра кроссене юратса ирттереççĕ. Вĕсене хутшăнакан çынсен хисепĕ çулсеренех ӳссе пырать. Йĕлтĕр спорчĕ чăн-чăн халăх спорчĕ пулса тăрать. Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросне кăçал нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă условийĕсенче туса ирттерме тивет. Çакă вăл комсомол, профсоюз тата физкультура организацийĕсене йĕлтĕрлĕ кроса организованнăрах ирттерме хушать.

Кроса лайăхрах туса ирттерес тесе, ăна ирттерме хатĕрленнĕ май комсомолăн нумай райкомĕсемпе горкомĕсем тата профсоюзпа физкультура организацийĕсем чылай ĕçсем тунă. Çапла Канаш хулинче январь уйăхĕн вĕçĕнче хулари йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне туса ирттернĕ, çав ăмăртăва 180 çын хутшăннă. 2-мĕшпе 13-мĕш номерлĕ шкулсен тата хулари пожарнăй командăн коллективĕсем хăйсен организованноçне тата йĕлтĕрпе лайăх çӳреме пĕлнине кăтартнă. 2-мĕш номерлĕ шкулти комсомолецсем йĕлтĕрлĕ кроса ирттересси çинчен сӳтсе-явса, хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илнĕ: Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне 200 боец-йĕлтĕрçĕ хатĕрлемелле, арçын ачасемпе 20 километрлă, хĕрачасемпе 15 километрлă военизированнăй поход туса ирттермелле, 7—9-мĕш классенче вĕренекен ачасемпе çар вăййи туса ирттермелле, шкулта вĕренекенсенчен 90 процентран кая мар çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе «отлично» тата «хорошо» паллăсем илччĕр, начар вĕренекенни пĕр ача та ан пултăр, хулари йĕлтĕрлĕ кросра пĕрремĕш вырăн йышăнассишĕн шкулта социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла. Ытти шкулсем те вара 2-мĕш номерлĕ шкул пекех тума тытăннă.

Улатăр районĕнче 2.260 боец-йĕлтĕрçĕ хатĕрленĕ, комсомолецсемпе комсомолра тăман çамрăксем хăйсен вăйĕпе 279 мăшăр йĕлтĕр тунă. Комсомольски районра 3.511 боец-йĕлтĕрçĕ хатĕрленĕ, хăйсен вăйĕпе 173 мăшăр йĕлтĕр тунă. Вăрмар, Вăрнар, Етĕрне районĕсем те кроса начар мар хатĕрленнĕ.

Профсоюзсемпе комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕ вăл — ĕçе тата социализмлă çĕршыва хӳтĕлеме хатĕррине пăхса тухни, Хĕрлĕ Çарăн боевой резервĕсене пăхса тухни пулать. Ăна организованно, çарти пек туса ирттермелле.

Кроса ирттерес тĕлĕшпе комсомол, профсоюз, физкультура организацийĕсен нумай ĕçлемелле пулать. ГТО нормисене отлично парас ĕçе лайăх хатĕрлемелле.

Паян пуçланакан кросс çарпа физкультура ĕçне малалла аталантарса яма, пуçламĕш физкультура организацийĕсене тĕреклетме, рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенцин çĕнĕ йышĕсене физкультура занятийĕсем туса пырас ĕçе явăçтарма пулăшмалла.

Комсомол, профсоюз тата физкультура организацийĕсен йĕлтĕрлĕ кроса йĕркеллĕ ирттерме тата мариецсемпе пыракан ăмăртура мала тухма пĕтĕм вăйран тăрăшмалла.

Çамрăксем — йĕлтĕрсем çине!

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа туса ирттерекен йĕлтĕрлĕ кроса пурте пĕр çын пек хутшăнар, кашни хамăр предприятин, колхозăн учрежденин, шкулăн тата пĕтĕм республикăн спорт чыслăхĕшĕн кĕрешер! Çакă вăл Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна тивĕçлĕ парне пулса тăрĕ.

Г. Петрухин,
ВЛКСМ Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

—o—

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ВИЛЬГЕЛЬМСХАФЕНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: февралĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Вильгельмсхафена вăйлăн тапăннă. Вильгельмсхафен вăл Германи тинĕс-çар бази тата подводнăй лодкăсем тăвакан тĕп вырăнĕ пулса тăрать. Англин 3 бомбардировщикĕ хăйсен базине таврăнман.

Февралĕн 11-мĕшĕнче, кăнтăрла, бомбардировка тăвакан авиацин «Бостон» йышши самолечĕсем Розандальпе Серкри (Çурçĕр Франция) чугунçул çинчи сортировка станцийĕсене тапăннă. Кунсăр пуçне, Канри завод çине бомбăсем пăрахнă. Пĕр бомбардировщик хăйĕн базине таврăнман. Пĕр истребитель боевой разведкăран таврăнман.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Французсен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, çанталăк начар тăни сĕр синче çапăçма кансĕрленĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Александер генерал Каирта çар корреспонденчĕсене çапла каланă: тăшмана Триполитанирен пĕтĕмпех хăваласа кăларнă. Англин 8-мĕш армийĕн патрулĕсем Тунис территорине нумай шала кĕрсе кайнă. Роммель тĕнĕл доржависен Тунисри войскисемпе пĕрлешесшĕн. Вăл Марет линийĕнче мĕн май килнĕ таран вăрахрах, Германин Тунисри войскисенчен татăлса юлас хăрушлăх тухса тăриччен тытăнса тăма тăрăшĕ. Марет линийĕ хыçĕнче, Габеса хирĕç, лайăх позици пур, мĕншĕн тесен унта вырăн туллă-сăртлă, анчах та ăна Марет линине хатĕрленĕ пекех хатĕрлеймен. Марет линийĕн тăрăшĕ 40 миля çеç, вăл меллĕ позициех мар, çăмăллăн куçакан чаçсем унран флангсемпе пырса иртсе кайма пултараççĕ. Вăйлă çумăрсем союзниксен ĕçĕсене кансĕрлеççĕ.

НИМĔÇ САМОЛЕЧĔСЕМ ШВЕЦИ ЧИККИ УРЛĂ КАÇНĂ

ШВЕЦИ АРТИЛЛЕРИЙĔ ГЕРМАНИН ПĔР САМОЛЕТНЕ ÇĔР ÇИНЕ АНТАРНĂ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 12-мĕшĕ (ТАСС). Стокгольмри радио каланă тăрăх, Швецин оборона министерстви çапла пĕлтернĕ: февралĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Сконе провинцийĕ тĕлĕнче (Кăнтăр Швецире) Германи гидропланĕ курăннă. Вăл Швецин Карсскрунри тинĕс-çар бази тĕлĕнчен иртсе кайнă вăхăтра зенитнăй артиллери ун çине асăрхаттармалла пенĕ. Самолет каялла çаврăнса кайман пирки ăна вара вăйлах пеме тытăннă, самолетăн шыв çине анса лармалла пулнă. Çар влаçĕсем çав самолетăн экипажне вара самолечĕпе пĕрлех тытса чарнă.

Çав вăхăт тĕлнеллех Сконе районĕнче нимĕçсен иккĕмĕш самолечĕ курăнса кайнă. Темиçе хутчен асăрхаттармалла пенĕ хыççăн вăл кăнтăр-хĕвелтухăçнелле вĕçсе кайнă.

ШВЕЦИРЕ ФАШИСТЛА ОРГАНИЗАЦИ ТУПНĂ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Социал демократен» хаçат çапла пĕлтерет: «Швеци контрразведки фашистсен йăвине тупнă. Нацистла çамрăксем пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулса калаçнă çуртра хĕçпăшалсем те тупнă. Çак ĕçе темиçе ютçĕршыв çынни хутшăннă. Полици пĕр студента — Линдхольмăн фашистла партин членне тытса хупнă. Çав студент хĕçпăшалсен склачĕн заведующийĕ пулнă. Вăл çуртра çар курсĕн занятийĕсем те пула-пула иртнĕ».

Кĕрешӳ итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес тĕлĕшпе районсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртура Шупашкар районĕ мала тухнă тесе йышăнчĕç. Пирĕн района Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă. Çакă вăл — Шупашкар районĕнчи колхозсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн питех те пысăк чыс.

Иртнĕ çулхи çуракине районри колхозсем — кĕске срокра, 9 кун хушшинче, уйрăм колхозсем, çăмахран, «Осоавиахим», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те 6—7 кун хушшинче туса ирттернĕ. Тырпулсене те эпир унччченхи çултинчен 25 кун маларах пухса кĕртрĕмĕр. Пĕлтĕрхи декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтертĕмĕр. Аслă çулпуç Сталин юлташ фронта пĕтĕм вăйран пулăшса пыма чĕннипе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем пур ĕçсене те хăвăрт та пысăк пахалăхпа туса пычĕç.

Çакăн пек паха ĕçе пула районри колхозсем, вăтамран илсен, тĕштырăсем кашни гектартан планпа пăхнă 13,2 центнер вырăнне 15,3 центнер, çĕрулми 106 центнер вырăнне—120 центнер илчĕç. Ытти тĕрлĕ культурăсене те колхозсем планпа палăртнинчен тухăçлăрах туса илнĕ. Малта пыракан колхозсен результачĕсем татах та лайăхрах. «Осоавиахим» колхоз кашни гектартан ыраш 22 центнер, çурхи тулă—17 центнер, сĕлĕ—20 центнер, пăрçа—20 центнер, çĕрулми—198 центнер илнĕ; «Путь Ленина» колхоз кашни гектартан 24 центнер пăрçа, 300 центнер çĕрулми; «Строитель» колхоз гектартан—30 центнер пăрçа туса илнĕ.

Çав çитĕнӳсене колхозсем ĕçе тĕрĕс организациленипе, агротехника мероприятийĕсене туллин пурнăçа кĕртсе пынипе тума пултарчĕç. Колхоз уйхирĕнчи ĕçсене, уйрăмах тырпулсене пухса кĕртес ĕçе, çитĕнне колхозниксем кăна мар, ваттисемпе пĕчĕккисем те хутшăнчĕç. Хĕрарăм пысăк вăй пулнине шута илсе, нумай колхозсенче иртнĕ çул ача яслисемпе площадкисем, пĕрлешӳллĕ столовăйсем организациленĕ. Колхоз уйхирĕсенче, бригадăсенче 300 агитатор ытла ĕçленĕ. Вĕсем çĕршывра, отечественнăй вăрçă фрончĕсенче пулса иртекен событисем çинчен, партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен колхозниксене вăхăтра ăнлантарса панă.

Колхозсене иртнĕ çулта Шупашкар хулинчи рабочисемпе служащисем пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсене çакăншăн тав тумалла.

Вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Кашни колхоз, кашни бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç, колхозниксем харпăрхăй хушшинчи ăмăртăва анлăн сарчĕç. Çавна пула ĕнтĕ малтанхи хут алла плуг тытнă уйрăм колхозницăсем нормăна 150—200 процент таран тултарса пычĕç. Лапсар ялсоветĕнчи «Новый быт» колхозри Татьяна Васильева колхозница сӳренĕ çĕрте нормăна 250 процент тултарса пынă. Паçпакри «КИМ» колхозри Александра Тихонова колхозница жнейкăпа сезонра 53 гектар тырă вырнă, кунне вăл 8—10-шар гектар вырнă. Çав колхозрах Шуркин колхозник çавапа кунне пĕрер гектар ыраш çулнă, куллен 5-шер ĕçкунĕ туса пынă. МТС-ри трактористка Е. Кудрявцева сезонри нормăна 250 процент тултарса, 2 тоннăна яхăн горючи перекетлесе хăварнă.

Колхозсем государствăна тырă памалли, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывмалли плансене вăхăтра тултарчĕç. Натуроплатăна 1943 çулхи ĕçсемшĕн те аванс шучĕпе 720 центнер панă. Колхозниксем хăйсен ытлашши тыррисенчен Хĕрлĕ Çар фондне 400 центнер хывнă.

Районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те паха çитĕнӳсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 119 процент, сыснасем енĕпе 108 процент, сурăхсем енĕпе 101 процент пурнăçа кĕртнĕ. 1941 çултипе танлаштарсан, ĕнесен хисепĕ 1.142 пуç, сыснасен хисепĕ 1.655 пуç, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 2.151 пуç ӳснĕ. Кашни фуражлă ĕнерен планпа пăхнă 1.065 литр вырăнне—1.100 литр сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран планпа пăхнă 2,1 килограмм вырăнне 2,12 килограмм çăм илнĕ. Анчах уйрăм колхозсенче выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноçĕ япăх ӳсе пырать-ха.

Халĕ колхозсем хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Вăрлăх фончĕсене эпир пур культурăсем тĕлĕшпе те пĕтĕмĕшпех хывса хăварнă. Халĕ вăрлăхсене сортлас, вĕсен пахалăхне тĕрĕслес ĕç пырать. Малтанлăха тĕрĕсленĕ тăрăх, вăрлăхсем 98—99 процент шăтаççĕ. Машинăсемпе инвентарьсене ремонтлама пур колхозсем те тытăннă. МТС хăйĕн тракторĕсемпе машинисене Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле юсаса çитерет.

Халĕ кадрсем хатĕрлетпĕр. Колхоз председателĕсене, бригадирсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсене, тырă акакансене семинарсенче вĕрентетпĕр.

Колхозсенче лашасене мĕнле пăхнине тĕрĕслесе тухрăмăр. Ку енĕпе çитменлĕхсем нумай-ха. Уйрăмах лаша кӳлмелли хатĕрсемпе транспорт инвентарĕсем япăхса кайни палăрать.

Колхозсем агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртсе пырассишĕн çине тăрса кĕрешеççĕ. Уйăхлăх вăхăтĕнче уйхире тислĕк чылай кăлартăмăр, кĕл, торф, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, минераллă удобренисем пухса хатĕрлерĕмĕр.

Шупашкар районĕнчи колхозсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармĕç. Вĕсем çав çитĕнӳсен никĕсĕ çинче тата иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илсе, 1943 çулта татах та вăйлăрах тырпул туса илессишĕн, çĕршывпа фронта—тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленноçа — чĕртаварсем татах та ытларах парĕç. Çакăнпа эпир ылханлă нимĕç захватчикĕсене çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшăпăр.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

БГТО тата ГТО значокĕсен нормисене пачĕç

КАЛИНИНО. Педагогика училищинче вĕренекенсем К. Николаев военрук ертсе пынипе кулленех йĕрлтĕрлĕ тренировкăсенче пулаççĕ. Çак кунсенче вĕсем 5 километрлă дистанцие йĕлтĕрпе кайса килчĕç. 2-мĕш «В» класра вĕренекен Т. Филиппов çак дистанцие 32 минутăра чупса тухас вырăнне 26 минутăра, 1-мĕш «А» класра вĕренекен Г. Михайлов—28 минутăра, В. Срединский—29 минутăра чупса тухрĕç. Вĕренекенсем халĕ 10 километрлă дистанцие йĕлтĕрпе кайма хатĕрленеççĕ. Йĕлтĕрлĕ ăмăртусенче пулнă вĕренекенсем чылайĕшĕ БГТО тата ГТО значокĕсен нормисене пачĕç.

Г. Андреев.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ВОДОСВЕТА

çакă пек работниксем кирлĕ: производствăпа техника отделĕн начальникĕ—инженер, инженер-теплотехник, инженер-строитель—прораб, десятник, конструктор, старши бухгалтер, снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен ответ. исполнитель, кладовщик, механиксем, машинистсем-дизелистсем, масленщиксем, газогенераторла автомашинăна çӳрекен шофер, электромонтерсем слесарьсем тата тĕрлĕ рабочисем.

Ĕç условийĕсем калаçса татăлнă тăрăх пулаççĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Чувашская ур. 66, Водосвет, кадрсен отделĕ.

Водосвет дирекцийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ИТ 948. Типография № 1, Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58 84 п.